
6-мĕш класра чăваш литературипе
«Çăкăртан асли çук»
пая пĕтĕмлетни
Тишкерӳллĕ
проект урок

# Урок эпиграфĕ:

Çăкăр вăл – сĕтел илемĕ.
Çăкăр – пурнăç тăсакан.
Вăл пулас кунсен хĕлхемĕ.
Тĕнче ырă – вăл пулсан.

В. Давыдов-Анатри.

# Ева НиколаевнаЛисина



1939-мĕш çулта Патăрьел районĕнчи Именкасси ялĕнче çуралнă.

Çырма 60-мĕш çулсен вĕçĕнче пуçланă.

«Çăкăр чĕлли» калавĕ Российăра тата Германире литература премине çĕнсе илнĕ.

Литературăра тунă çитĕнӳсемшĕн ăна Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ ятне, Митта Ваçлейĕн премине панă.

# Алексей Воробьев – уй-хир юрăçи

- Унăн пултарулăхĕнче уйрăмах тăван ялпа унăн çыннисем çинчен, анлă уй-хир, ырă та илемлĕ çут çанталăк çинчен çырнă сăвăсем тĕп вырăн йышăнаççĕ.

  Надежда Иванова -



- Мĕн пĕлетĕр эсир çăкăр çинчен?
- «Çăкăртан асли çук»,- тесе ахальтен каламан ваттисем, Сĕтел çине те ытти апат – çимĕçе лартиччен чи малтан çăкăрпа тăвар лартаççĕ. Пепке çут тĕчене килсен ун ячĕпе çăкăр пуçласа ас тивеççĕ. Ачана çирĕп сывлăх, вăйăм кун-çул, телейпе пархатар сунаççĕ. Инçе çула тухать –и, салтака каять-и,çемье çавăрать – и- пур чухне те амăшĕ хăйĕн тĕренчĕкне пуçламан çăкăрпа пиллет, ыррине сунать. Тупа тунă чухне те çынсем çăкăр çыртса тупа тăваççĕ.
- Çăкăр – пирĕн пурăç, халăх пуянлăхĕ. Çăкăр авалтанпах халăхра пысăк хисепре пулнă. «Умăнтан çăкăр ан татăлтăр»,- тенĕ çынсем пĕр – пĕрне ырă сунса.Паян кун та эпир  хисеплĕ хăнасене çăкăр –тăварпа кĕтсе илетпĕр.


Çăкăр


Çăкăр
çавра
ăшă
ăшă
техĕмлĕ
кăпăшка
çемçе

| Ваттисен сăмхĕсем | Пословицы |
| --- | --- |
| Ȇçчен çыншăн çăкăр та ( кулачă пекех) | Изба красна не углами , (а пирогами ) |
| Выçсан çăкăр та тутлă, (тăрансан пыл та йÿçĕ) | Земля-матушка,( а хлеб –батюшка), |
| Арман чулĕ витĕр тухмасăр çăкăр (çăвара кĕмест) | Без золота проживешь, (а без хлеба – нет) |
| Хура çăкăр çиекен ниçта та хур курман) | Без соли не вкусно, ( а без хлеба не сытно) |
| Пÿрт кĕтеспе мар ( кукăльпе илемлĕ) | Будет хлеб – ( будет и обед). |
| Çăкăр-тăвартан (асли çук). | Была бы голова на плечах, ( а хлеб будет). |
| Çăкăр тутине( ĕçлекен пĕлет). | Без соли , без хлеба- ( половина обеда). |

Ева Лисина «Çăкăр чĕлли»

Алексей Воробьев «Çурхи хирте», «Çăкăр»

Стихван Шавли «Хумханать ыраш», «Çăкăр сăмси»

Георгий Ефимов «Çăкăр татăкĕ çинчен»

Гурий Чаржов «Эс упра çăкăра», «Раççей сĕтелĕ çăкăртан пуян»

Хветĕр Акивер «Уй-хир ĕçченĕсене», «Ĉç аллисем»

Петĕр Эйзин «Çăкăр»

Александр Артемьев «Çăкăр хакĕ»

Иван Яковлев «Кулачă»

А. Неверов "Ташкент - город хлебный"
С. Есенин. "Песнь о хлебе"
В Астафьев "Молитва о хлебе" (из романа "Прокляты и убиты")
С. Викулов. "Хлеб"
Ю. Яковлев. "Цветок хлеба"
Пришвин М. "Лисичкин хлеб"
Паустовский К. "Теплый хлеб"
Г. Х. Андерсен "Девочка, которая наступила на хлеб"
Белорусская сказка "Легкий хлеб"

- КАНУ САМАНЧÊ
- Вăштăр-вăштăр çил вĕрет,
- Сарă пучах авăнать.
- Çил арманĕ çаврăнать.
- Тырăран çăнăх пулать.
- Çил лăпланчĕ, чарăнăр,
- Ларса шăплăха итлер.
- Тăтăмăр, лăплантăмăр,
- Вырăна вырнаçрăмăр.

.

# СИНКВЭЙН ( 5 йĕркеллĕ рифмăсăр сăвă )

1 япала ячĕ
2 паллă ячĕ
3 глагол
Предложени
Синоним (метафора)

Çăкăр
Техĕмлĕ, çемçе.
Юратаççĕ, çиеççĕ, хисеплеççĕ.
Техĕмлĕ, çемçе çăкăра пурте юратса çиеççĕ.
хисеплеççĕ.

Çăкăр- пурнăç.

# «Çăкăр чĕлли » калав

**Персонажсем**

**Çут çанталăк**

**Çĕнъял ялĕ**

- **Еля**
- **амăшĕ**
- **Лисук**
- **ача-пăча**
- **лавçă**
- **тухтăр**
- **инвалид пичче**

**. юлташ хĕрсем**

**Ĕç умĕ, ĕç аталанса пыни, ĕç хĕрсе çитнĕ вăхăт, ĕç вĕçленни**

# Илемлĕх мелĕсене туп

- Хĕвел вĕрекен шыв тăкăннă евĕр çунтарать.
- Пит куçа тар  çиет, çулçăсем лапсăр кайнă тата вĕри сывлăш вĕлтĕртетет.
- Эпĕ ытамланă çĕр пичĕ – çăкăр пĕçерме хунă кăмака тĕпĕ пек – вĕри те асамлă.
- Вăл пĕчĕк ача пек савăнса каять, кулать, аппапа иксĕмĕре çĕнĕ кĕпе çĕлесе пама ĕмĕтленет.
- Ман умра куççуль тĕтри сиккелет, янкăр тӳпе хĕррипе яр-р! та яр-р! хĕвел шăвать, ун хĕрлĕ çути тимĕр витнĕ çурт тăррипе ман паталла юхса килет.
- Çĕр чăмăрĕ евĕр çавра çĕн çăкăр куратăп умра .

- Хĕвел вĕрекен шыв тăкăннă евĕр çунтарать.( танлаштару)
- Пит куçа тар  çиет, çулçăсем лапсăр кайнă тата вĕри сывлăш вĕлтĕртетет.
- ( сăпатлантару),вĕри сывлăш ( эпитет)
- Эпĕ ытамланă çĕр пичĕ – çăкăр пĕçерме хунă кăмака тĕпĕ пек – вĕри те асамлă.( сăпатлантару)
- Вăл пĕчĕк ача пек савăнса каять,( сăпатлантару) кулать, аппапа иксĕмĕре çĕнĕ кĕпе çĕлесе пама ĕмĕтленет.
- Ман умра куççуль тĕтри сиккелет, янкăр тӳпе хĕррипе яр-р! та яр-р! хĕвел шăвать, ун хĕрлĕ çути тимĕр витнĕ çурт тăррипе ман паталла юхса килет.( сăпатлантару, эпитет).
- Çĕр чăмăрĕ евĕр çавра çĕн çăкăр куратăп умра .
- ( танлаштару)

Çăкăр? Инçе çул шиклентермест мана . Анне сăмахĕсем ман чунăн чи ачаш кĕтесне сĕртĕнчĕç.Тырă вырнă вăхăтра колхозра çăкăр паркалаттчĕç- ха: çăкăр çисе курнă. Анчах эпĕ, финн вăрçи тапраннă çул çуралнăскер, тăхăра çитсе те хамăр килте çăкăр пĕçернине ас тумастăп. Çăкăршăн таçта та çитме хатĕр.

| Кластер таблици | Паллă ячĕ | Япала ячĕ | глагол |
| --- | --- | --- | --- |
| 243- мĕш страница 1 абзац | инçе | çул | Шиклентермест |
| «Çăкăр» 5 хут тĕл пулать «çул» сăмах 2 хут тĕл пулать. | ачаш | Çăкăр<br>анне<br>сăмахĕсем<br>чун<br>ачаш<br>тырă<br>вăхăт<br>колхоз<br>çăкăр<br>çăкăр<br>финн вăрçи<br>çул килте<br>çăкăр<br>çăкăр | сĕртĕнчĕç<br>вырнă<br>паркалатчĕç- ха<br>çисе курнă<br>тапраннă<br>çуралнăскер<br>çитсе<br>пĕçернине<br>ас тумастăп<br>çитме хатĕр |

## « История про девочку , которая наступила на хлеб»

## сказка Ханса Христиана Андерсена.

В одном городе со своей мамой жила маленькая девочка по имени Инге. Была она очень грубая и никого не любила. Однажды мама попросила её отнести для бабушки хлеб, Инге долго отказывалась, но всё-таки согласилась при условии, что она наденет новые сапожки. Когда она шла по дорожке, на её пути встретилась большая лужа. Инге бросила в эту лужу хлеб и наступила на него. После этого она провалилась в лужу и попала в царство живущей там Болотницы, которая разозлилась из-за поступка Инге и превратила её в птичку, дав при этом наказ — собрать столько зёрен, сколько было использовано для приготовления хлеба, на который она наступила. Инге собрала зёрна и обратно превратилась в девочку, только теперь она стала доброй и себелюбивой

| *Еля* | *Инге* |
|---|---|
| *9 çула çитсе те çăкăр килте пĕçернине ас тумасть .*<br><br>*Хăйĕнчен аслă аппăшне çăкăршăн больницăна илсе кайма килĕшет.*<br><br>*Çăкăршăн таçта кайма та хатĕр.* | *Никама та юратмасть , кăнттам хĕр ача.*<br><br>*Асламăшĕ патне çăкăр леçме çĕнĕ пушмакне тăхăнма ирĕк парсан çеç килĕшет .*<br><br>*Кўлленчĕкре пушмакне варалас мар тесе çăкăра пăрахса ун çине пусать .* |

# Çăкăр

***Уяв***

***ĕмĕт***

***телей***

***çителĕклĕ пурнăç***

***асамлă юмах***

ИНГЕ

*Хлеб на землю бросила, прямо в грязь,*
*Наступила ножкою, не стыдясь!*
*Не может быть, не может быть!*
*— Даю Вам слово чести!*
*Не может быть, не может быть!*
*— Да лопнуть мне на месте!*

**Чĕлле эп тытатăп тирпейлĕн,**
**Вăл- çăкăр, Ун ячĕ çӳлте**
**Хĕвел пайăрки пек хĕлхемлĕн**
**Куçать ун ăшши ман ӳте**
**Эп ĕмĕт çитнишĕн хавасلă**
**Вĕрентнĕ пире ачаран:**
**« Нихçан çăкăртан ан пул аслă»**
**Саккун вăл пултăр ялан.**

Алексей Воробьев.

# «Çăкăр» сăввăн тĕп шухăшĕ

- Чĕлле эп тытатăп типтерлĕн.

Вăл – çăкăр.

Ун ячĕ çӳлте.

- Нихçан çăкăртан ан пул аслă.

**Тус-тăванăм, çакна эс ан ман:**
**Çĕр çинче асли çук çăкăртан!**
**Пуç тайса хисепле эс ăна,**
**Вăй та пурнăç парать вăл сана.**
**Çăкăр вăл - çĕр аннемĕр парни,**
**Вăл пулсан, эпир вăйлă, пуян.**
**Ĕçлĕ халăх ăна хаклани,**
**Êмĕртен вăл пырать, авалтан.**

В. Давыдов – Анатри

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| **Ç** | **и** | **а** | **ç** | **ă** | **т** |
| ĕ | н | с | у | к | а |
| р | ч | л | к | ă | н |
| ç | е | и | ç | р | ! |

« Çăкăр икĕ хут пиçет» ,- теççĕ халăхра. Çак сăмахсен пĕлтерĕшне уçса парăр.

1Çăкăр малтан уйра тырă тапхăрĕнче хĕвелпе пиçет.

Уйра пиçнĕ хыççăн тырра комбайнпа выраççĕ, çапаççĕ, сăвăраççĕ.

Кайран тырра авăраççĕ те çăнăх тăваççĕ.Çăнăхран чуста çăраççĕ. йӳçĕтеççĕ,

2 Хыççăн формăсем çине хурса кăмакара пĕçерсе кăлараççĕ.


Тĕмер ялĕнчи механизаторсем (1948 ç.)

Тĕмер ялĕнчи механизаторсем
(1948 çул)



Ялти механизаторсен ушкăнĕ (иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсен вĕçĕ)

Александр Васильевич Сапожников – Чăваш АССР тава тивĕçлĕ механизаторĕ, III степень Ĕç Мухтав орденне, Чăваш АССР Аслă Совечĕн Хисеп грамотине виçĕ хутчен тивĕç пулнă.














- Пĕлме интереслĕ :
- **Ăсчахсем шутланă тăрăх, çитĕнсе çитнĕ çын кунне 500 грамм çăкăр çиет.Йывăр ĕçре ĕçлекен çын 800 грамм çăкăр çиет.Ку çынна 1000-1600 калори энерги парать.**
- **Çăкăрта 4,7-7% белок, 40-45% углевод пур.Апла пулсан çын хăйне кирлĕ микроэлементсенчен çуррине çăкăртан илет.**
- **Çăкăра пысăк калориллĕ апат-çимĕç тесе шутлатпăр.100 грамм ыраш çăкăрĕ калорипе виçĕ чăх çăмартипе, икĕ стакан сĕтпе, 140 грамм чăкăтпа е 60 грамм сырпа танлашать.**
- **Пысăк сортлă тулă çăнăхĕнче фосфор, магни, тĕрлĕ витаминсем нумай.**
- **Пĕр батон пĕçерме *1200* пĕрчĕ тулă кирлĕ.**
- **Тĕнчере кашни кун *82000* тонна çăкăр пĕçерççĕ.**

# *Пĕтĕмлетӳ*

*Çăкăр!*

*Унăн пурнăçри хакне, пĕлтерĕшне каласа пама сăмах та çитес çук. Вăл çĕр-анне паракан хаклăран та хаклă ырлăх, пуянлăх.*

*Çăкăр – халăх пуянлăхĕ. Унран асли çук.*

*Çавăнпа та çăкăра хисеплер, упрар, сума сăвар, пуç таяр. Яланах пирĕн сĕтел çинче çăкăр-тăвар пултăр.*

# Рефлекси

Мĕн килĕшрĕ?

Мĕн çĕннине пĕлтĕм?

Мĕн интереслĕ пулчĕ?